

# 2019 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента изложени çырма хатĕрлесси

*Егорова А.С., Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедрин доценчĕ*

# Экзамен ĕçĕн тытăмĕ

Пĕтĕм ĕç 3 пайран тăрать.

1-мĕш пайра – итленĕ текста çывăх изложени çырмалла. Изложенири сăмах шучĕ 70-тен кая пулмалла мар.

***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***



# Изложени тексчĕ

*Кашни этемĕн телей виçи хăйне майлă. Пĕриншĕн лайăх мăшăр тупни – чи пысăк телей. Иккĕмĕшĕ сăра курки аллине лексенех хăйне телейлĕ тесе шутлать. Виççĕмĕшĕн телейĕ тыр-пул хăçан тата мĕнле акса хăварнипе çыхăннă. Иван Яковлевич вара хăй телейне халăх телейĕнчен уйрăм курма пултараймасть. Тăван халăх хăйне паян телейлĕ тесе каласан вăл та хăйне паян эпĕ телейлĕ тесе калĕ. Шел те, паянлăха халăх апла калаймасть-ха. Эппин, Иван Яковлевич та хăйне телейлĕ тесе шутлаймасть.Унăн халăха телейлĕ тăвассишĕн ытларах та ытларах ĕçлес пулать…*

*Арçын ачасен класĕнче вĕренекенсем питĕ килĕшеççĕ Иван Яковлевича. Чăнах та, маттур ачасем унта. Вĕсемшĕн савăнмалăх пур. Çакă – унăн телейĕн пĕр пайĕ. Вĕренекенсем – тĕрлĕ çĕртен. Акă Константин Иванов… Пушкăрт чăвашĕ, маларах икĕ çул арçын ачасен шкул çумĕнчи пуçламăш училищинче вĕренчĕ. Питĕ маттурскер: сăрлама та, çырма та пултарать, юрлама та ăста. Тăрăшсан чăн- чăн художника та тухĕ…*

*Николай Васильев – Шупашкар енчисем, Иккасси ялĕнчен. Тĕлĕнмелле çивĕч чĕлхеллĕ.*

*Тепĕр ача килĕшрĕ Яковлева. Ку вăл – Етĕрне енчен Исментер ялĕнчен килнĕ Даниил Семенов.*

*Сĕве тăрăхĕнчен килнĕ Тăхăрьял ачи Тимкка Семенов (ăна ялта Тайăр Тимкки теççĕ иккен) питĕ маттур пулас, теме те пĕлесшĕн çунать…*

*«Кусем халăхшăн тăрăшакансем пулĕç», – шухăшларĕ Яковлев ачасем патĕнчен черетлĕ урокран тухнă май.* (Юхма Мишши çырни тăрăх.)

# Çырса памалли сăмахсем:

***Николай Васильев, Иккасси, Етĕрне, Исментер, Даниил Семенов, Тимкка Семенов.***

# Ачасен ĕçĕсем

Изложени.

Кашни этемшĕн телей вĕçи хăйне майла. Пĕриншĕн, лайăх мăшăр тупасси; иккĕмĕшшĕн, сăра курки алла илсен; виççĕмĕшшĕн тыр-пул хăçан акасшĕн.

Арçын ача класĕнче Иван Яковлев * Яковлев тахăшсене сисрĕ. Акă Константин Иванов — чăн-чăн пушкăрт чăвашĕ. Сăрлама та, юрлама та пĕлет. Теприи — Николай Васильев. Вăл çивĕч чĕлхеллĕ. Иван Яковлевич тата пĕр ачана сисрĕ. Тимкка Семĕнов, Тăхăрьял ялĕнчен, маттур пулас.

Чăнах та, маттур ачасем кунта вĕренеççĕ. „Кусем халăхшăн тăрăшакансем пулĕç", — шухăшласа тухрĕ Иван Яковлевич.

# Ачасен ĕçĕсем

Изложени

Кашни этемĕн хăйĕн телмĕ пур. Тĕрлĕлĕхĕн-лайăх маттăр лекни чи лайăх телми. Инкăлĕхĕн – сăра курни лекни хăйне телĕлĕ тесе шутлать. Вырăнлĕхĕн тура хăран анасси. Иван Яковлев та хăйне телмĕлĕ тесе калĕ. Шуп те апла лапп хапак телмилĕ тесе шутламасть. Телмĕлĕ пăвăспать пулсан, ĕçлес пулать.

Аврăн ачасем Иван Яковлев шкулĕнче вĕренекенсене ытте хăйсем килĕшмеҫĕ. Ҫакă унăн телмĕ.

Ачă пĕри Константин Иванов. Питĕ маттур, ăнкурне те, ҫырма та, юрлама та ăста. Тăрăшсан художник пулĕ.

Николай Васильев Шупашкартан. Тĕлĕнмелле ача.

Петр ача Яковлева килĕшекенни Данил Семёнов.

Тăкарьял ачи Тимкка Семёнов. Питĕ пĕлесшĕн, ӳкмать.

Курни калăкшан тăрăшмакан пулĕ, шупашлапĕ Яковлев урок пух на лай.

# Текстпа пĕрремĕш хут паллашни

- Текста тимлĕн итлемелле, содержанине ас туса юлма, текстри сюжет йĕрне çирĕп тытса пыма тăрăшмалла.
- Текста çывăх план е тĕрев конспекчĕн пайĕсене çырса хума юрать. Чи шанчăклă мел – вуланă текста ас туса юлма тăрăшни.
- Текста мĕнле стильпе çырнине, темине, тĕп шухăшне палăртма тăрăшмалла, ума тăратнă проблема çине автор мĕнле пăхнине асăрхамалла. Çавсем çине таянса ансат план йĕркелемелле.

# Текстпа иккĕмĕш хут паллашни

Текст миçе пайран тăнине, тĕп шухăша палăртакан сăмахсене, пĕр абзацран теприн патне куçма пулăшакан сăмахсемпе предложенисене çырса пыма юрать. Калаçу тата стиль тĕлĕшĕнчен уйрăмах куçа курăнакан сăмахсене çырса хăвармалла. Манерĕ енчен тĕп вырăнта мĕнле пуплев (калав, сăнлав, ăслав) тăнине ăнланмалла.

# Шута илĕр!

- Изложени оригиналпа туллин тӳр килме тивĕçлĕ.
- Оригиналта çуккине хушса çырма юрамасть.
- Текстăн стильне сыхласа хăвармалла.
- Илемлĕх, кăмăл-туйăм мелĕсем мĕнле палăрнине шута илмелле.
- Сăмах пĕлтерĕшне контекстра тишкермелле.
- Сăнарлă сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсене шута илмелле.
- Текстăн темипе тĕп шухăшне тĕрĕс тупмалла.



# Çырса пырăр!

**Текстăн тĕп сăмахĕсене çырса пырăр**



- пайăр ятсене;
- пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсене;
- фактсене;
- датăсене;
- час-час тĕл пулакан сăмахсене;
- синонимсемпе антонимсене.

Вĕсем текстăн тĕп шухăшне уçса пама пулăшĕç.

1 факт йăнăшĕ пулсан – 1 балл чакать

2 е ытларах факт йăнăшĕ пулсан – 2 балл чакать

# План тăвасси

Кашни пункт валли фактсем хатĕрлес пулать.

– текстра чи пĕлтерĕшли мĕн иккенне палăртăр;

– чи кирлине автор мĕнле майпа кăтартнине пĕлĕр; автор сăмахĕсемпе усă курса тезиссем хатĕрлĕр;

– текстăн тĕп тезисне уйăрăр;

– текстăн кӳртĕм пайне тупăр;

– абзацсене е шухăшсене тĕпе хурса тунă планăн пункчĕсене çырса хурăр;

– пĕтĕмлетӳре мĕн каламалли çинчен шухăшлăр.



# Асра тытăр!

***Изложени текстне 1-мĕш сăпатран çырнă пулсан – ачан та 1-мĕш сăпатран çырмалла.***

***Апла тумасан – факт йăнăшĕ.***



# Тĕрев конспекчĕ çырасси

Хута вертикаль йĕрпе çурмалла уйăрмалла.

Хут листин пĕр енне текста ***пĕрремĕш хут вуланă*** хыççăн (е вуланă вăхăтрах) тĕрев сăмахĕсем çырса пыраççĕ.

Тепĕр енне – ***иккĕмĕш хут вуланă*** хыççăн (е вуланă вăхăтрах), сиктернĕ сăмахсемпе предложенисене хушаççĕ, текст авторĕн витĕмлĕ сăмахĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсене çырса хураççĕ. Йăнăшсем пулсан – тӳрлетеççĕ.



# Асра тытăр!

***Текста кĕскетнĕ чух***

– микротемăсене;

– текстăн тĕп шухăшне;

– автор аргуменчĕсене;

– автор пĕтĕмлетĕвне;

***кăларса пăрахма юрамасть!***



# Изложени ҫырма вӗрентесси

***Кӗскетмелли мелсем***

- **Тӗп мар информацие кӑларса пӑрахни**

Тӗп (пит кирлӗ) информаци: текстӑн тӗп шухӑшӗ

- **Улӑштарса пӗтӗмлетни (обобщение с заменой)**
- **Пӗрлештерни (слияние)**



# Эксперт мĕн тĕрĕслет?

| | |
|---|---|
| **Изложенире оригинал текстăн содержанийĕ палăрни** | |
| Текст содержанийĕ пĕртте пăсăлман. | 2 |
| 1 факт йăнăшĕ пур. | 1 |
| Оригинал текстăн содержанине пачах уçса паман е 2 тата ытларах факт йăнăшĕ тунă. | 0 |



# Эксперт мĕн тĕрĕслет?

| | |
|---|---|
| **Оригинал текстăн содержанине уçса панă чухнехи шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ** | |
| Ĕçре логика йăнăшĕсем çук; логика çыхăнăвне тумалли чĕлхе мелĕсемпе пĕлсе усă курнă; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| Ĕçре логика йăнăшĕ 1 пур; тата/е логика çыхăнăвне тумалли чĕлхе мелĕсемпе усă курнă чухне 1 йăнăш тунă; тата/е 1 йăнăш абзацсем тунă чух кайнă. | 1 |
| Ĕçре логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă; тата/е логика çыхăнăвне тумалли чĕлхе мелĕсемпе усă курнă чухне 1-рен ытла йăнăш пур; тата/е абзацсем тунă чухне 1-рен ытла йăнăш тунă. | 0 |



# Эксперт мĕн тĕрĕслет?

| **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
|---|---|
| Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса памашкăн шкул ачи йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курнă. | 2 |
| Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курни сисĕнет. | 1 |
| Сăмах çўпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курнă | 0 |



# Вăхăтпа пĕлсе усă курăр!

Пĕтĕм экзаменăн 240 минутĕнчен **80-ăшĕ** изложени валли каять.

**Изложени** çырма – **70** минут:

**5** минут – **план** тума,

**50** минут – **черновик** çырма;

**15** минут – изложение **шурă хут** çине куçарса çырма.

Текста вулама тата ăнланса илме панă вăхăт – **10** минут. Ку е вăл ĕçе 5–10 минут маларах е каярах пĕтерсен те пĕтĕм экзамен 240 минут картинчен тухмалла мар.



# Экзаменра ӑнӑçу сунатпӑр!